Медицина ĕçне чунĕпе парăннисем

# Хавшак сывлăхпа малашлăх çуккине

**шута илсе çирĕп сывлăхшăн кĕрешесси кашни çыннăн тĕллевĕ пулмалла (Э.А. Фомина терапевт ĕмĕтĕнчен).**

...Хĕр чухнехи ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ Эльвира кӳршĕ пахчари шăпчăк юррипе иленсе, ирхи уçă сывлăшпа туллин сывласа ытти кунхинчен малах ĕçе тухса утрĕ. Ĕçе юратса кайни тата киле кăмăллă таврăнни чăн-чăн телей пулни çакăн пек ырă шăплăхра яр уççăн палăрать. Пĕрре мар ума килнĕ ку шухăш. Юратнă мăшăрĕ Василий хăйне ăнланни, кĕçĕн çулсенчи Тольăпа Таня та амăшне çула тухасран ĕсĕклесе чарас ӳсĕмрен иртни хӳхĕм хĕрарăма пĕр шиксĕр тикĕссĕн малалла уттарчĕ. Пытармăпăр, Эльвира Анатольевна сывлăх хуралçин ĕçĕнче хăйĕн çулне тупнă: çамрăк хĕрарăм сакăр çул ĕнтĕ район терапевтĕнче вăй хурать. Акă, тавралăх илемĕпе киленсе утсах тухтăр ĕç вырăнне çитрĕ. Ĕç калăпăшĕ паян пысăк. Терапевт ĕнерех палăртса хунă тĕллевсемлĕ журнала ума хурса уçрĕ те тăруках шухăша кайрĕ...



Эльвира ача чухне, ялти вуншар-çĕршер ача пекех, ӳссен хăй учитель е культура ĕçченĕ, сĕт сăвакан е пахчаçă пуласси пирки калаçнă. Астăвать-ха, çулсем иртнĕ май çак шухăшсене те йĕрке кĕме пуçларĕ. Хĕрачана уйрăмах тухтăрсем шкула пырса ачасене укол, прививка туни, чĕресене итлени кăсăклантаратчĕ. "Мĕншĕн?" ыйту умра тăратчĕ ун чух. Çавăнпах ĕнтĕ пушă вăхăтра тухтăрла выляни те сахал мар пулнă. Çаксем кашниех халĕ çывăх кино çинчи пек куç умне тухрĕç. Тухрĕç те асаилĕве шалтан шала илсе кайрĕç.

Саккăрмĕш класа çитнĕ çĕре хĕре биологипе анатоми предмечĕсем ытларах та ытларах кăсăклантарма пуçларĕç. Çак интерес та татса паман хушма ыйтусем çуратрĕ: çынра япаласен ылмашăвĕ мĕнле пулса иртет-ха, çын чирлесен организм мĕнле улшăнать, вăл е ку чиртен сываласси епле пулса пырать тата ăна валли мĕн тумалла? Ыйтусем нумай, хуравĕсем...

Ӳсекен хĕрĕн тĕллевĕсем те капмарлансах пыраççĕ. Сакăр класс пĕтернĕ хыççăн пĕрле вĕреннĕ Венерăпа Таня Кировск облаçĕнчи Яранскри медицина училищине вĕренме кайма тăрсан, ачалăх кунĕсене пĕрле ирттернĕскерсенчен Эльвира та юлас темерĕ. Анчах пурнăç тути-масине курнă амăшĕ "шкул пĕтермелле" тени хĕре инçе çула хуптарчĕ. "Тĕрĕс мар турăм теес килмест. Анне каланине итлесе вăтам шкул пĕтертĕм те çирĕпленнĕ кăмăлпа Чăваш патшалăх университечĕн алăк хăлăпне кайса тытрăм. Шкулта пухнă пĕлӳ экзаменсене ăнăçлă тытма çитрĕ – студент пулса тăтăм",– явăнчĕç пуçра амăшне тав тунă май инçех хыçа юлман çулсем.

Çамрăклăх – хăналăх. Акă, студент çулĕсем те хăвăрт иртсе кайрĕç, умра – пурнăçăн анлă сукмакĕ. Кунта вара университетра илнĕ пĕлӳпе тивĕçлĕ усă курасси малти вырăнта. 1991– 92 çулсенче республикăри тĕп больницăра интернатура ирттернĕ хыççăн Эльвира Муркашри тĕп больницăна çамрăксен терапевчĕ пулса ĕçлеме вырнаçать. Малашлăх – çамрăксенче. Çак тĕллевпе кӳлĕнет хастар хĕр тата çамрăк специалист çĕн ĕçе. Çакăнта вăл ачасен сывлăхĕ çине ашшĕ-амăшĕ эрехпе иртĕхни, аслисем экологи çине тимлĕх уйăрманни, çĕршыври социаллă лару-тăру витĕм кӳнине пуçламăш хут терапевт куçĕпе курать. "Эрех – уйрăмах пысăк инкек сăлтавĕ,– вĕлтлетрĕ ĕçе ирех çитнĕ терапевт пуçĕнче шухăш. Паян çуралнăскер мар вăл, анчах...– Çынсем нумай тата йывăр чирлени ытларах чух эрех виçесĕр ĕçнипе никĕсленет. Çак сăлтавпах чирсем хăвăрт аталанаççĕ тата шала каяççĕ. Çапла вара куç умĕнчех çын ĕмĕрĕ кĕскелет. Эрехпе пирус серепине лекнĕ çынсем хушшинче онкологи, туберкулез, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсемпе аптăракансем йышланни пурнăç вăрăмăшĕ çине тӳремменĕх витĕм кӳреççĕ. Çакна ăнланса илнĕ çынсем сывлăх хуралçисемпе туслăх кĕперĕ йĕркелесен, тухтăрсем панă канашсенчен пăрăнмасан, вĕсем сĕннĕ диетăсене пăхăнсан тата сиенлĕ йăласенчен хăтăлсан, спортпа туслă çыхăну тытсан, общество пурнăçĕ самай малалла каймалла". Çакна пурте пĕлетпĕр, анчах... пĕлнипех пурлă пулаймастăн...

...Алăкран шак! шак! шаккарĕç те тухтăра кӳршĕ палатăна чĕнчĕç. Эльвира Анатольевна Фомина шухăш тĕнчинчен уйрăлса ĕç вырăнне таврăнчĕ. Чӳрече умĕнчи йывăç тĕмми ерипен хумханни тулта çил туха пуçлани пирки калать... тата çут çанталăкпа çывăх туслашмалли çинчен. Эрех-пирусран пăрăнса çак çула суйласан, этем ĕмĕрĕ палăрмаллах вăрăмланасси пирки иккĕленӳ те çук. Çакна шанатпăр та: хавшак сывлăхпа малашлăх çук. Эльвира Анатольевна ординаторскинчен тухса чĕннĕ палатăна васкарĕ. Урамри çил вара йывăççене лăскамах пуçларĕ...

**Анатолий БЕЛОВ.**

Уяв умĕнхи пĕтĕмлетӳллĕ интервью

# В. Данилов: «СЫВЛĂХ ХУРАЛНЕ МАЛА ХУНИ ÇĔНĔ ТĔЛЛЕВСЕМ ÇУРАТАТЬ»



***Çын сăкăрпа çеç тутă пулаймасть тенинче этемлĕхĕн сывă пурнăç йĕркинчен пăрăнмасăр хăйне те, общество пурнăçĕпе экономикăна та аталантармалли куç умне тухать. Теори шайĕпе пăхсан çапла пулмалла пулсан та, практикăра яланах кĕнеке çинчи пек пулса пымасть. Хамăр алăпах йывăрлăхсене хамăр еннелле туртатпăр. Хыççăн "сӳлтисене" ятлама пăхатпăр. Ăçта-ха чăн тĕрĕслĕхĕ? Кам Раççейре ирĕклĕ те савăнăçлă пурнайрать? Ĕмĕртен пыракан ыйтусем. Кашнинех хумхантараççĕ вĕсем. Анчах, тăхтăр-ха, пурне те укçалла илме пулать те сывлăха вара пасарта сутмаççĕ, тенипе пулса тухнă ларутăрава тишкерсен айăпĕ хамăртах пытанни куç умне тухмасть-и? Мĕнле пăхать-ха çак çивĕчлĕх çине "Муркаш районĕн тĕп больници" муниципаллă сывату учрежденийĕн тĕп врачĕ Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ тата хатĕр-и-ха районти сывлăх хуралçисем сывлăх фронтĕнче паянхи кун ыйтнă пек хуралта тăма? Медицина ĕçченĕсен професси уявĕ умĕн В. ДАНИЛОВПА район хаçачĕн сотрудникĕ А. БЕЛОВ тĕл пулнă.***

**– Владислав Григорьевич, Сире хăвăра тата халăх сывлăхĕшĕн ырми-канми вăй хуракан туслă коллективăра медицина ĕçченĕсен профессиллĕ уявĕпе эсир сыватнă çынсен ячĕпе саламлатăп, сирĕн пархатарлă ĕçĕрсене чысласа çĕре çити пуç тайса тав тăватăп.**

– Хăвăр сăмахăрсене коллектив ячĕпе каланăшăн пысăк тав. Пирĕн туслă çемье пĕчĕк мар: районти сывлăх хуралĕнче пĕтĕмпе 670 çын ĕçлет. Вĕсенчен 86-шĕ аслă пĕлӳллĕ врачсем, 297-шĕ медицина сестрисем. Вĕсемсĕр пуçне пĕрлехи ĕçре уйрăлми пай пулса тăракан фельдшерсемпе акушерсем, санитаркăсем, ытти техника ĕçченĕсем. Район халăхĕн сывлăхĕ вĕсен кашнин тăрăшулăхĕнчен килет. Çакна медицина ĕçченĕсем пурте ăнланаççĕ, ăнланаççĕ те çанă тавăрса ĕçлеççĕ. Пулнă майпа усă курса вĕсене пурне те Медицина ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе саламлатăп. Эсир тăрăшни – район, республика, Раççей тĕрекĕ, вĕсен пуласлăхĕ. Çак пархатарлă çул çинче сире уçăмлăх, çирĕп сывлăх, пуçланă ĕçе вĕçне çитерме ăнăçу сунатăп.

**– Районти медицина аталанăвĕпе пурнăça кĕрекен çĕнĕлĕхсем çинчен сăмах ваклама пуçличчен Муркаш Енри сывлăх хуралĕн историйĕпе паллашни те ытлашши пулас çук.**

– Хирĕçлеместĕп. Муркашри тĕп больница хăйĕн историне 1923 çулта уçăлнă фельдшер пунктĕнчен пуçлать пулсан, Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ райбольница тымарĕсем 1835 çулта уçăлнă фельдшер пунктне пырса тивеççĕ. Муркашра стационарсăр, амбулаториллĕ ялти врач участокĕ 1930-мĕш çулта уçăлнă пулсан, Мăн Сĕнтĕрте 10 койкăллă медицина участокĕ 1878 çулта ĕçлеме пуçланă. Унтанпа кашни çул пирĕн тăрăхри сывлăх хуралĕ вăй илсе пынă, ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тунă. Паян çĕршер çынна пĕрлештерсе тăракан коллектив больницăсен хătлă çурчĕсенче халăх сывлăхĕшĕн малалла кĕрешет, правительствăпа тĕрлĕ шайри ертӳçĕсен пуçарăвĕсене пурнăçа кĕртет.

**– Кунта манăн пирĕн калаçăва иртнĕ кĕркунне РФ Президенчĕ В. Путин палăртнă наци проекчĕсем çине куçарас килет, мĕншĕн тесен приоритетлă çав проектсенчен пĕри – халăх сывлăхĕ. Мускавра тымарланнă çав пуçару Муркаша çитрĕ-ши?**

– Питĕ вăхăтлă ыйту. Ку вăл пурнăç ыйтăвĕ те. Эпир ку проекта тахçанах кĕтнĕ. Патшалăх тинех халăх сывлăхĕ çине конкретлă тимлĕх уйăрчĕ. Ман шутпа, сывлăхсăр çынна политика та кăсăклантармасть, экономикăпа культура аталанăвĕ те шухăшлаттармасть, ĕç те кирлĕ мар. Сывă çын кăна Раççей, республика, район пурнăçне тухăçлăн малалла уттарĕ. Наци проекчĕ района мĕн пани патне çитиччен хамăрăн кулленхи ĕçсем çинче чарăнса тăрар-ха. Юлашки çулсенче районта тĕрлĕ чирсенчен профилактика тăвасси, çынсен пурнăçне тăсассипе ĕçлесси, сывă пурнăç йĕркине аталантарасси нумай енлĕ пулса пырать. Ку тĕлĕшпе сыватупа профилактика учрежденийĕсенче сывлăх шкулĕсем ĕçлеççĕ, медицина пулăшăвĕ халăх патне çывăхарах пултăр тесе ялсенче врачсен пĕрлехи практика уйрăмĕсем уçăлаççĕ т. ыт. те. Ку ĕç малалла пырать: çак уйăх вĕçĕнче Уйкас Янасалти врач амбулаторийĕн уйрăмĕн никĕсĕнче врачсен пĕрлехи практика уйрăмĕ ĕçлеме тытăнмалла. Кунти юсав ĕçĕсене ирттерме пĕр миллиона яхăн тенкĕ укçа кайрĕ. Пытармăпăр, çакăнпа Уйкас Янасал тăрăхĕнче халăха квалификациллĕ медицина пулăшăвĕ парасси вăйланĕ.

Медицина пулăшăвĕ парасси пирки калаçнă чух çакна та палăртса хăварассăм килет: пирĕн районта çулленех 60-70 медицина ĕçченĕ Шупашкарта е Раççейри ытти хуласенче хăйсен професси пĕлĕвне ӳстерет. Çавăнпа та чылайăшĕ 1-2 категориллĕ специалистсем. Л. Андреев травматологпа реанимаци уйрăмĕн пуçлăхĕ И. Ярдыков вара аслă категориллĕ тухтăрсем. Хăйсен ĕçĕнчи чăн-чăн ăстасем вăтам медперсонал хушшинче те чылай.

**–Ăстасем тенĕ чух професси уявĕ умĕн вĕсене ятран палăртсан та ытлашши пулас çук.**

– Ку тĕрĕсех. Паян наци проекчĕ тăвăллăн аталаннă вăхăтра сывлăх сыхлавĕн пуçламăш сыпăкĕсем – ялсенчи фельдшерпа акушер пункчĕсем – пысăк утăмсем тăваççĕ. Кунта Сыпайĕнчи Л. Кудряшова, Кашмашри Т. Скворцова, Çуткӳлти В. Егорова, Очăкассинчи В. Матвеева, Ахманери Р. Яндушкина фельдшерсене ырăпа палăртмалла. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче – ыттисемшĕн тĕслĕх. Ăста врачсем пирки калас пулсан, Лина Павловнапа Геннадий Мефодьевич Огурцовсене, Э. Фоминапа И. Королькована, С. Гусакпа А. Ярухина, А. Ильинана, В. Басяевпа В. Любимована, Р. Михайлована сиктерсе хăварма çук.

Медицина сестрисем те– врачсен пирвайхи пулăшуçисем. Вĕсемпе ĕçлекен Марина Юрьевна Шарапова тĕп медсестра уйрăм тав сăмахне тивĕç. Унпа пĕрлех С.Куликова, Т. Жагерова, И. Атласкина, Т. Горшкова, С. Сергеева, Н. Степанова, А. Федорова медсестрасем те хăйсен ĕçĕнче чăн маттурлăхпа палăраççĕ.

Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ больница та районти сывлăх хуралĕшĕн пысăк тĕрек. Леонид Иванович Самушков тĕп врач ертсе пыракан коллектив районти халăх сывлăхĕшĕн пысăк ĕç туса ирттерет. Çакна валли кунта пысăк квалификациллĕ ушкăн йĕркеленсе çитрĕ. Пысăк тав вĕсене хăйсем пурнăçлакан ĕçĕсемшĕн. Уяв умĕн уйрăм сăмахсем Н. Григорьевпа В. Прокопьев хирургсене, Г. Николаевапа В. Самушкова врачсене, Н. Самушкинапа Л. Матвеева, Р. Афанасьевапа Т. Колесникова, К. Алешинапа В. Михайлова медсестрасене калас килет. Тавах вĕсене пурне те ырми-канми ĕçĕсемшĕн.

**– Çĕнĕ условисенче районти сывлăх хуралĕ мĕнле çулпа кайни те районта пурăнакан кашни çынна хумхантарать. Мĕнле çĕнĕ пулăшусем парайĕç шурă халатлă ĕçченсем çывăх малашлăхра?**

– Сирĕн малалла пăхас ыйту пире те тăтăшах хумхантарать. Кун-çул уттинчен юлас мар тесе эпир хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшатпăр. Çак çул çинче эпир пĕччен те мар. Пĕрлехи тимлĕхпе иртнĕ çул вĕçĕнче Мăн Сĕнтĕрсем, уйăх каялла Муркашсем çывăх 5 çуллăхра сывату ĕçĕпе ĕçлеме лицензисем илтĕмĕр.

Эпир пĕччен мар терĕм те, хамăра аталану çулĕнче пулăшакансем пирки уйрăм сăмах. Районта сывлăх хуралне сулмаклă уттарассипе район администрацийĕ, ЧР Сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министерстви, ЧР Президент администрацийĕ пысăк пулăшу параççĕ. Акă, наци проектне пурнăçа кĕртсе ЧР Президентĕнчен районти Акатуйра районти сывлăх сыхлавне валли диагностика оборудованийĕпе васкавлă медицина пулăшăвĕн машинисен свидетельствисене илтĕмĕр. Çак конкретлă пулăшу района 5 миллион та 494 пин тенкĕлĕх тĕкĕ пулчĕ. Уйрăммăн каласан, çывăх вăхăтрах район больницине Японире кăларнă рентген аппарачĕ (224599 тенкĕлĕх), Корейăра кăларнă ультрасасăллă аппарат ( 563 пин тенкĕлĕх), Германире кăларнă 3 каналлă 5 электрокардиограф ( 238053 тенкĕлĕх), васкавлă медицина пулăшăвĕн пысăк çӳреслĕхлĕ 3 автомашини (1127 пин тенкĕлĕх) килĕç. Кусемсĕр пуçне Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ райбольница валли лаборатори оборудованийĕн комплекчĕ ( 70849 тенкĕлĕх), Корейăра кăларнă стационарти ультрасасăллă аппарат ( 563 пин тенкĕлĕх), Германире кăларнă 3 каналлă 2 электрокардиограф ( 95221 тенкĕлĕх). Çакă пире хавхалантарать, çĕнĕлле ĕçлеме хистет, пĕлĕве ӳстерсех тăма ыйтать. Эпир çапла тăвăпăр та. Куратăр пулĕ, район администрацийĕпе ЧР Правительстви те, ЧР Президенчĕ Н. Федоров та сывлăх сыхлавĕнчен айккинче тăмаççĕ. Вĕсен пуçарăвĕсене пурнăça кĕртме пирĕн пуян опытлă та тарăн пĕлӳллĕ ĕçченсем çителĕклĕ. Çакăнпа усă курса районти халăх сывлăхне лайăхлатассипе хамăртан килнине йăлтах тăвасса шантаратăп. Сăмахăма вĕçлесе пур медицина ĕçченĕсене тата ветеранĕсене те профессиллĕ уяв ячĕпе тепĕр хут ăшшăн саламлатăп.

Пай çĕрĕсен хуçисене пĕлме

# 90 çулччен панă документсем паян та вăйра

Вулакансен ыйтăвĕсене район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ Олег Иванович Тимофеев хуравлать.

– Пай çĕрĕсене харпăрлăха илнине çирĕплетекен документсене 90-мĕш çулсенче пачĕç. Вĕсене тепĕр хут çĕнетме кирлĕ-ши?

– "О государственной регистрации прав на недвижимое имущество и сделок с ним" Федераллă саккун ĕçлеме пуçличчен панă свидетельствăсем паян та вăйра тăраççĕ. Свидетельствăсем çук пулсан конкретлă колхозăн, совхозăн çĕрне приватизацилени çинчен район администрацийĕ кăларнă решенирен çырса илнисене (выписка) панă. Çак выпискăсем те вăйне çухатман. Ку "Об обороте земель сельскохозяйственного назначения" Федераллă саккунăн 18 статйипе килĕшсе тăрать. Анчах та çĕр хуçи хăйĕн пайне сутма е унпа урăхла майпа усă курма шутлать пулсан, ăна юстици органĕсенче регистрацилемелле. Ку ĕçе куçман пурлăха регистрацилекен Муркаш район регистраци службинче тăваççĕ.

Райхаçатăн çитес номерĕнче пай çĕрĕсене арендăна парас, сутас, йăхран йăха куçарас, улăштарас ыйтусем çине хуравлăпăр.

Пульницăра çуралнă ырă шухăшсем

# Тав тăватăп сывлăх хуралçисене

Çулсем иртнĕ май сывлăх хавшани антратни пулкалать те, кун пек чух час-часах пульницăра сывалма тивет. Çакăн чухне çеç эпир шурă халатлă сывлăх хуралçисен пархатарлă ĕçне вĕçне çити курса туллин хаклайратпăр. Нумаях пулмасть мана та Муркашри тĕп пульницăн терапи уйрăмĕнче сывлăха çирĕплетме тиврĕ. Мĕн калам? Паллах, чи ăшă сăмахсем! Çавăнпа та пульницăри сыватупа вăй илнĕ çĕнĕ туйăмсем медиксен професиллĕ уявĕ умĕн сăвва çаврăнчĕç. Халĕ кун çути куракан йĕркесем врачсемсĕр пуçне медсестрасемпе санитаркăсемшĕн те, ытти техникăлла ĕçченсемшĕн те.

Пурте çӳреç халатпа,
Тап таса та шур тĕспе.
Тирпейлĕхе пĕлтерет
Кам кунта вăй хурать.
Хушамачĕ Фомина,
Хăйĕн ячĕ – Эльвира.
Ашшĕ пекех кăмăлпа,
Амăш пекех сатуркка.
Авилова Эльзăна
Эмел ятне çыртарать:
Кунне виççĕ памалла,
Апат умĕн ĕçмелле.
Зоя Прокопьевна, ав,
Медсестрасем хушшинче
Аслă сестра шутланать,
Терапинчех тăрăшать.
Королькова кардиолог,
Инна тенĕ хĕр чухне,
Чĕре чирне ЭКГ
Алла илсе тĕрĕслет.
Тухтăр невролог та пур –
Валериан Николайч.
Камсем чирлĕ нервăпа –
Сыватать, парать кулач.
Чĕнеççĕ ăна Галина,
Хушамачĕ – Ильина,
Боярина Альбинапа
Ĕçлеç санитаркăра.
Сыватнишĕн чир-чĕртен,
Çын пурнăçне тăснишĕн,
Пурăнсамăр çĕр çулччен,
Сывлăх пултăр кашнийĕн.

**В. ПАВЛОВ,**
**пенсионер.**

Турай ялĕ.